«Педагогсемпе наставниксем – Муркаш çĕрĕн мухтавĕ»

# Унăн ĕçĕсем – халăх асĕнче

«Пурнăç çулĕ – тумхахлă çул», – тенĕ ваттисем. «Ĕмĕр иртересси уй урлă каçасси мар», – асăрхаттараççĕ пурăнса ăс пухнисем. Ĕмĕре йĕркеллĕ пурăнса иртерме пусăра – ăс, алăра – ĕç, чун-чĕрере çирĕп сывлăх та ырă кăмăл кирлĕ. Кашни çыннăн хăйĕн шăпи, хăйĕн ăраскалĕ. Çын ĕмĕрне çĕр çулпа виçеççĕ. Анчах та çĕр çула çити пурăнакан питĕ сахал. Вĕсен кунçулĕ вăрăм пулнин вăрттăнлăхĕ мĕнре-ши? Ĕмĕр чиккине çывхарса пыракан мучисем çапларах калаçа параççĕ: «Ĕçкĕпе иртĕхмерĕм, çынна усал сунмарăм-тумарăм, кирлĕ-кирлĕ марпа хăтланмарăм, алран ĕç ямарăм». Паллах, ваттисем калашле, ĕмĕр тикĕс килмест. Пурăнан пурнăçра хуйхи-суйхи те, савăнăçĕ-хавасĕ те çителĕклех. Ĕмĕр тăршшĕн кашни тапхăрĕнче хăйне май улшăну, аталану пулса иртет. Анчах та пурнăç çулне утса тухма мĕн чухлĕ чун хавалĕ, вăйхăват, çĕкленÿлĕх, чăтăмлăх кирлĕ. «Ĕмĕр – çитмĕл çичĕ тумхах, çитмĕл çичĕ кукăр», – тесе ахаль каламан ваттисем. Пурнăçра çĕр пăрăнăç тени те тĕрĕсех.

Москакасси тăрăхĕ сахал мар сумлă ывăл-хĕр çитĕнтернĕ. Вĕсенчен пĕри – Москакасси шкулĕнче ĕмĕрĕпе ĕçленĕ Аркадий Архипович Архипов.

### Ачалăхпа çамрăклăх

Аркадий Архипович 1919 çулта кăрлач уйăхĕн 16-мĕшĕнче Ситуккасси ялĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Унăн ашшĕ, 1882 çулта çуралнă Архип Егорович Егоров, граждан вăрçине хутшăннă, питĕ паттăр çапăçнă. Амăшĕ Васса Алексеевна Егорова, 1886 çулта çуралнăскер, питĕ ĕçчен хĕрарăм пулнă, ун аллинче ĕç вĕресе кăна тăнă. Вĕсем çемьере питĕ йышлă та туслă пулнă. Пурĕ 9 ача. Аркадий вара – чи асли, чи маттурри пулнă, çамрăклах ĕçе кÿлĕннĕ. 1928 çулта Ахмане ялĕнчи тăватă класлă пуçламăш шкула каять. Тавçăрулă ача питĕ тăрăшса вĕреннĕ. Унăн пĕрремĕш вĕрентÿçи Михаил Капитонович Капитонов ачасене лайăх вĕрентнĕ. Кайран вăл Чăваш АССР çут ĕç министрĕ пулнă. 1932 çулта Аркадий Ахмане шкулне лайăх паллăсемпе вĕренсе пĕтерсен Москакасси ялĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкула каfive. Пиртен çĕленĕ сумкăпа, çăпатапа, килте тĕртнĕ пир кĕпе-йĕмпе пулсан та, шкулта вăл хăйне пур енчен те хастар кăтартнă.

Аркадий Архипов класс тулашĕнчи ĕçсене питĕ хастар хутшăннă. Салтак пулма тăрăшсах хатĕрленнĕ: противогаз тăхăнма вĕреннĕ, спортра туслă пулнă, пăшалтан тĕл пенĕ. Унăн "Ворошиловский стрелок", БГТО значокĕсем пулнă. Вăл питĕ кăмăллă каччă пулса çитĕннĕ, ĕçе юратнă, унăн туссем нумай пулнă. Ун пекки чăн та пит сахал пулать.

Каярахпа тепĕр икĕ çултан, 1939 çулта, Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Мал туртăмлă каччă вĕрентÿçĕ пулас тесе Шупашкарти педагогика институтне вĕренме кĕрет. Анчах çимелли, тăхăнмалли çук пирки малалла вĕренеймест. Кăштах укçа ĕçлесе илес тесе вербовкăпа Камчаткăна пулă тытма каять. 1940 çулхи çу уйăхĕнче пилĕк талăк океанра тата ултă талăк Охотское тинĕс тăрăх ишнĕ. Тĕттĕм ялтан тухнă ача валли кунта тĕлĕнмелли темĕн чуль пулнă. Йĕри-тавра электричество çути, электроплитасем. «Олаи» ятлă пулă комбинатĕнче ĕçлеме пуçлать. Аркадий анлă тинĕсре тĕрлĕ йышши пулă тытнă, тирпейленĕ.

Çамрăк каччăн вăхăтлăха вĕренмелли çинчен манмалла пулса тухнă, саккун йĕркипе салтака кайма тивнĕ, Беринг тинĕсĕ хĕрринче, Анадырь хулинче, пограничник пулса çĕршыв чиккисене хÿтĕленĕ.

### Хумханулла 1418 кунпа каç

Шел те, 1941 çулта мирлĕ пурнăçа аркатса Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланать. Вăрçă пуçланнă кун Аркадий Архипович ытти салтаксемпе пĕрле физзарядкăна тухнă. Волейболла выляма пуçăннă кăна, сасартăк чуна çÿçентерсе сирена янăраса кайнă. «Салтаксем вăрçă пуçланни çинчен пĕлсен пĕр самант ним калайми пĕр-пĕрин çине пăхса тăчĕç», – каласа кăтартнă каярахпа Аркадий Архипович. Кайран вĕсене 17 талăк хушши Владивосток тинĕс тăрăх илсе кайнă. Ун хыççăн поездпа Биробиджан хулине илсе кайнă. Биробиджанта вăл 802-мĕш корпусăн артиллери полкне лекнĕ. Унти разведартдивизионта вăл наводчик пулнă. Кайран вĕсен çар эшелонне Хĕвел анăç енне илсе кайнă. Çĕнĕ вырăнта вăл звукометрист, дешифровщик, метеоролог пулнă. Артиллерие координатсем парса тăнă.

Каярахпа вĕсен составĕ 102-мĕш укрепрайона лекет. Вĕсем дзотсемпе траншейăсем хатĕрленĕ.

Аркадий Архиповичăн вăрçă вăхăтĕнче Тăван çĕршывăн Хĕвел тухăç чиккине сыхлама тивнĕ. Ун чухне Яппун çĕршывĕ тапăнса кĕрес хăрушлăх пысăк пулнă.

1945 çулта вĕсене Яппун чиккине илсе каяççĕ, яппун çарне Китай çĕрĕнчен хăваласа кăлараççĕ, миллион çынлă Квантун çарне çапса аркатаççĕ. Вĕсем малтанах Дудзман хулине илнĕ, кайран Фудзи хулине, унтан Цзямусы, Хайлар, Мугдин хулисене яппун милитаристсенчен ирĕке кăларнă.

Аркадий Архиповичăн вăрçă вăхăтĕнчи кунĕсене аса илмелли темиçе кĕнеке валли те çитет. Акă пĕррехинче Аркадий Архипович Дузьян хули çывăхĕнче пĕр вăрман хушшинче масарта пулнă. Çунакан Дузьян хули çутипе вăл яппун салтакĕсен çĕр ăшĕнчи казармине тупнă. Аркадий Архипович хăй çÿрекен Америка çĕршывĕ парнеленĕ «Дотц» тата юлташĕн «Вильюс» машини çине казармăри япалисене тиесе юнашар хулана каяççĕ. Çул çинчи кÿлĕ хĕрринче апатланса ларнă вăхăтра япун разведчикĕсене асăрхаççĕ. Йăпăр-япăр снайпер винтовкине авăрласа тăваттăшне те çавăнтах тĕп тунă. Çакăн хыççăн Архипов сержант ертсе пыракан разведчиксен ушкăнĕ никама систермесĕр Фудзи хулине вăрттăн вырăна пырса çитет. Кирлĕ координатсене штаба пĕлтереççĕ. Хăйсем çине артиллери çулăмне илеççĕ. Кĕçех пирĕн артиллеристсем хула çине вут-хĕм сапма тытăнаççĕ. Хулана вут-çулăм хыпса илет. Пирĕн разведчик-корректировщиксем чĕрĕ юлаççĕ. Совет салтакĕсем хулана ирĕке кăлараççĕ.

Тепрехинче Дзямук хулине кĕрсен Аркадий Архипович хăйĕн разведчикĕсемпе пĕрле пĕр библиотекăна пырса лекет. Салтаксем çĕршер-пиншер тем пысăкăш кĕнеке курса тĕлĕннĕ. Пĕр блокнотне Аркадий Архипович хăйпе пĕрле илсе тухать. Вĕсем библиотекăран тухса инçе те каяймаççĕ, библиотека хăрушшăн кĕрлесе сирпĕнсе каять. Çавăн пек яппун салтакĕсем хăйсем илсе кайма ĕлкĕреймен пуянлăха тĕп тунă иккен. Çавăн пекех тепрехинче пăрахса хăварнă шнурсем тăрăх тепĕр чаплă çурта сирпĕтме хатĕрленĕ взрывчаткăсен купине тупнă. Яппун салтакĕсем çурта сирпĕтме ĕлкĕреймен. Вĕсем, вырăс çарĕ хĕснине чăтаймасăр, хĕвел çаврӑнăш уйĕпе пытанса тарнă. Тепĕр яла пырса кĕрсен илемлĕхе питĕ юратакан чăваш каччине пĕррехинче кирпĕчрен тунă стена тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтернĕ. Пÿрчĕсем те кирпĕчрен пулнă. Çыннисем вара пурте тарнă. Тарнă чух хăйсемпе нимĕн те илсе каяйман.

Мугдина ирĕке кăларнă кун Яппун çĕршывĕ парăннине пĕлтернĕ. Ку хыпар пурне те савăнтарнă. Кĕçех киле кайма Сталин приказĕ тухать. Анчах вăрçă пĕтсен те Аркадий Архиповичăн Хĕвел тухăç чиккине тата тепĕр çул сыхламалла пулать. Çапла вăл салтак шăпи. Салтакăн пурнăçĕ çăмăл пулман. Нумай вĕрентнĕ, нумай ыйтнă. Кам вĕренмен – вăрçă вăйпа вĕрентнĕ. Никамăн та вăхăтăр вилес килмест. Питĕ нумай юлташа çухатнă ирсĕр вăрçăра. Аркадий Архиповичăн асĕнче пĕрле çапăçнă паттăр юлташ-салтаксен ячĕсем ĕмĕрлĕхех юлнă. Климов майор, штаб начальникĕ Горин капитан, Клепадский повар, Стукачев çар фельдшерĕ, батальон командирĕн заместителĕ Горов, Улатăр вырăс каччи Егор Петрович Талинов старшина, тутар ачи Тинатурин рядовой связист, Тилуганов снайпер, Кабнулин повар, Иосиф Петрович Кривой связист, Украинăран Плюскин снайпер, разведчиксен отделени командирĕ Черицын, Пеньковский политрук, Машинин санинструктор, Пудакин техник-лейтенант, Пермячков шофер водитель, 15 çар штабĕн начальникĕ Романов, Апнищенко, Пуркаев, Мамонтов рядовойсем, офицерсем. Çак паттăрсемпе Аркадий Архипович вăрçă çулăмĕ витĕр тухнă. Вĕсене яланах ăшă туйăмпа аса илнĕ.

Аркадий Архипович çавăн пекех пĕрле çапăçнă Николай Степанович Дедушкин писательпе туслă пулнă. Николай Степанович (28.03.1915 – 31.12.1995) вăрçă хыççăн паллă литература критикĕ, филологи наукисен кандидачĕ пулнă, чăваш писателĕсен союзĕн председателĕнче ĕçленĕ. Вĕсем час-часах тĕл пулса иртнĕ кунсене аса илнĕ.

Хастар салтакăн Аркадий Архипович Архиповăн ĕçĕ-хĕлне Тăван çĕршыв 17 медальпе тата 17 Хисеп грамотипе хакланă.

### Пурнăç малаллах шăвать

Аркадий Архипович киле иккĕмĕш эшелонпа çеç таврăнать. Таван çĕршыва килнĕ чухне уяр çанталăк пулнă, чунра телей, савăнăç. Ялта кулянмалли сăлтав тупăнать. Фронта кайнă 97 çынран 67 çын çапăçу хирĕнче пуç хунă.

Ачалăхри чи çывăх юлташĕ, чăваш çыравçисен союзне йĕркеленĕ, пĕрремĕш председателĕ, Ахмане ялĕнчи Андрей Петтоки (Петухов) паллă поэт паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ. 1943 çулта Веотик Архипович шăллĕ хыпарсăр çухалнă.

Хăйĕн тăванĕ Мешаков Илья Григорьевич вĕрентÿçĕ Совет Союзĕн Геройĕн ятне илсен чунтан савăнать.

Чĕрĕ юлнисен малаллах пурăнмалла. Чăн малтан çĕнĕ пÿрт лартать. Кивĕ çурчĕ арçынсен вăрçăра çапăçнă чух питех те кивелсе кайнă, пурăнма та майĕ пулман. Киле çитсен тепĕр кунне Оринина каять. Колхозра ĕçлеме пуçлать. Кайран «Максим Горький» ячĕллĕ колхозра уй-хир бригадин бригадирĕ пулса ĕçлет. Чăн та маттур та хастар çын пулнă Аркадий Архипович.

1949 – 1950 çулсенче Ахмане ял Советĕнче секретарь пулса ĕçлет. Нумай та вăхăт иртмест, 1951 çулта Москакасси шкулĕнче завхоз пулса тăрăшать. Çав хушăрах шкулта вĕрентÿçĕсем çитмен пирки вара рисованипе ĕç, физкультура вĕрентÿçи пулса ĕçлеме те ĕлкĕрет. Тĕлĕнсе çитермелле мар.

Аркадий Архипович ĕçлеме юратнă, физкультурăпа туслă пулнă, çавăнпа та çĕнĕ ĕçе пысăк кăмăлпа пуçăннă. Вăл пединститут пĕтермен, унăн малтанхи вăхăтра ачасемпе ĕçлеме опычĕ те пулман, анчах аслă опытлă ĕçтешĕсем ăна шаннă, йывăр вăхăтра кашни минутрах пулăшса пынă. Аркадий Архиповичăн аллине усман, йывăрлăхсене çĕнтерме мелсем шыранă.

– Шкулта предметсемпе вĕренмелли методика материалĕсем çукчĕ, – аса илнĕ Аркадий Архипович. – Вара Мускава, юлташсем патне, çыру çырса ятăм. Мана кĕнекесемпе методика пособийĕсем ярса пачĕç. Мĕн тери маншăн пысăк савăнăç пулчĕ, ĕçре вара çирĕп тĕкĕ пулчĕ.

Вăл вăхăтра шкул уçă вырăнта ларнă. Шкул умĕнче лашасемпе сурăхсем выртса каннă. Вăйлă çил пулнă тапхăрта шкул çинчи тимĕр листасем пĕрмаях вĕçсе кайнă, мĕншĕн тесен вăл вăхăтра шкул çине çăмăл листасем çеç витнĕ.

Шухăшласан-шухăшласан, Аркадий Архипович шкул йĕри-тавра йывăçсем лартма шут тытать. Çакна вăл йĕркелетех. Кашни шкул ачи 4-шар йывăç илсе килсе шкул йĕри-тавра лартать. Ачасемпе пĕрлех ашшĕ-амăшĕсем те сахал мар вăй хунă. Çут çанталăка упрасси – кашни çын тивĕçĕ. Чăн та ĕмĕт пурнăçланса пырать. Шкул йĕри-тавра йăмрасенчен каштасем туса карта тытаççĕ. Шкул пахчине тăвас ĕçе те ăна шанса панă. Унта вăл 270 улмуççи лартнă, пахча çимĕç ÿстернĕ, шкул пахчинче 7 пыл хурчĕн вĕллине тытма пултарнă. Шкул пахчинче çитĕнтернĕ пан улмие хулара çеç мар, Киров облаçне те кайса сутса укçа тунă. Юлнă пушă вырăна колхоз пахчинчен чăрăшсем илсе килсе лартма пултарнă.

Унăн ĕç урокĕсем питĕ интереслĕ иртнĕ. Урoксенче чăннипех те ĕçлеме вĕреннĕ. Шкул участокĕнче çĕр улми лартса çитĕнтерсе тупăш тунă. Çырла çитĕнтерсе, пасарсене кайса сутса укçа-тенкĕ тума пултарнă. Вĕлле хурчĕсене усрас ĕç те аталанма тытăннă. Ачасенчен нумайăшĕ çак ĕçпе интересленнĕ. Вĕллесене хĕл каçарас тесе омшаник тунă. Пылне сутса сахал мар укçа тунă. Машини-машинипе пан улми сутнă.

Шкул умне аллейăсем туса лартнă. Шкулта «симĕс класс» уçнă. Хĕлле ĕç урокĕнче верстаксем тума вĕреннĕ. Çакăн хыççăн вара шкула заказсем килме пуçланă. Сĕнтĕр лесничестви шăнкăрч вĕллисем туса пама ыйтнă. Çапла вара пĕр çулта унта валли 400 шăнкăрч вĕлли туса панă. Çав вĕллесене Шомикран пуçласа Шупашкар таран çакса тухнă. Ун хыççăн колхозсем шкула пыл хурчĕсем валли вĕллесем тума заказсем панă. Пĕр çулта «Слава» колхоза пыл хурчĕсем валли 27 вĕлле туса панă. Лесничество панă хăмасенсен шкул валли икĕ ача лармалли партăсем тунă.

Шкул тепĕр енче кролик ферми туса лартнă. Ертсе пыраканĕ биологи вĕрентÿçи пулнă. Вăл ачасемпе пахча çимĕç ÿстерме пуçланă. Çавăнта ÿстернĕ чи пысăк кавăна «Природа» выставкăна илсе кайса иккĕмĕш вырăна тухма пултарнă. Кавăнĕ 36 килограмм тайнă.

Каярахпа ĕç вĕрентÿçи кружок уçнă. Унта авиамоделированипе судомоделировани ĕçĕсем аталаннă. Интереслĕ кружока ачасем пурте тенĕ пекех çÿренĕ – тĕлĕнмелле çын ертсе пырать-çке çак интереслĕ кружока. Чи малтан 12 планер туса ăсталанă. Вĕсем вĕçнине курма пĕтĕм шкул ачи ашшĕамăшĕпе тухнă. Каярахпа яхтăсем тума пуçланă.



Рисовани урокĕсенче ĕçлеме Аркадий Архипович Мускавран ачасем валли кĕнекесем илсе килнĕ. Рисовани ĕçне кура скульптура ĕçĕ те аталанма тытăннă. Ачасем тăмран çынпа кайăксен кÿлепписене тунă. Ĕçĕсене Шупашкарти выставкăсене те ярса панă.

Пурăнсан-пурăнсан, Аслă Çĕнтерÿ кунне асăнса, ялсенче палăксем лартма йышăннă. Кунта та çак тивĕçлĕ ĕçе Аркадий Архиповича шанса панă. Ачасемпе пĕрле вăл шкулти вăрçăра пулнă вĕрентÿçĕсене асăнса тата клуб умĕнче тĕлĕнмелле илемлĕ палăксем ăсталаса лартнă. Ним çук çĕртен çĕнĕ, илемлĕ, ниçта курман палăк çитĕнсе тухнă тейĕн.

Пултаруллă çын пур çĕрте те пултаруллă çав. Аркадий Архипович купăспа калама тата юрлама питĕ кăмăлланă. Вăл «Шуçăм» юрăпа ташă ушкăнне çÿренĕ, ăна йĕркелекенĕсенчен пĕри пулнă. Вăл юрлаттарнă юрăсене тавраша шăрантарнă. Вĕсем аллăмĕш çулсенчех тĕрлĕрен концерт лартнă. Спектакльсем лартнă çĕре те активлă хутшăннă. Чи малтан «Цыганский барон», кайран «Судра» спектаклĕнче Катăк çăвар, «Айтар» пьесăра Куçук ролĕсене вылянă, «Вĕсен Тăван çĕршыв пур» спектаклĕнче Комаров лейтенант сăнарне ăста калăпланă тата ытти те. Ку кăларăмсене йĕри-таврари пур яла та кайса кăтартнă. Ял çыннисем Аркадий Архипович вылянă рольсене ăшшăн йышăннă.

Аркадий Архипович ачасемпе ял халăхĕшĕн вĕрентÿçĕ кăна мар, вăл сывă пурнăç йĕркине тытса пырса пурнăçри ырă тĕслĕх пулса юлнă. Вăл спорта, физкультурăна юратнă. Ачасемпе тĕрлĕ шăйри ăмăртусенчен çĕнтерÿсемпе таврăннă. «Зарница» вăййисенче те малти вырăнсене йышăннă. Аркадий Архипович хăйĕн пурнăçĕпе шкулта та, ялта та ырă ят хăварнă.

Мирлĕ вăхăтра та унăн пурнăçĕнче паттăрла ĕçсем тунă тĕслĕхсем те пулнă. Çуркунне пулнă ку ĕç. Хăнаран таврăнакан йĕркеллĕ çынпа унăн арăмĕ пăр çине кĕрсе кайнă. Асăрханулăх çинчен манса кайнă. Вĕсен телейне çывăхра Аркадий Архипович пулнă. Вăл вара икĕ çын пурнăçне анчах мар, виçĕ çын пурнăçне çăлнă.

Пĕррехинче Аркадий Архипович пĕве хĕррипе пынă. Юшкăн ăшĕнче вăл пĕр ачана асăрханă. Чупса пырса туртса кăларать-ха вăл, анчах пулăшу питĕ кая юлнă çав.

Тивĕçлĕ канăва тухсан та пĕтĕм чунне парса, вăйне, вăхăтне шеллемесĕр, тар юхтарса ĕçленĕ Аркадий Архипович. Кунĕн-çĕрĕн ĕçленĕ, тăрмашнă, ларса тăма пĕлмен. Унăн тума пĕлмен ĕç пулман. Унăн тавракурăмĕ питĕ анлă пулнă.

Вăл тунă пархатарлă ĕçĕсемшĕн Москакасси тăрăхĕнчи мĕнпур халăх ăна çĕре çити пуç таять.

«Педагогсемпе наставниксем – Муркаш ҫӗрӗн мухтавӗ»

# Ӑҫта ҫуралнӑ – ҫавӑнтах кирлӗ пулнӑ

Муркаш округӗнчи Москакасси шкулӗнче вӑй хунӑ Сергей Кириллов спорта тата сывлӑхлӑ пурнӑҫ йӗркине кӑмӑллакансен темиҫе ӑрӑвне ҫитӗнтернӗ. Вӑл Москакасси шкулӗнче 25 ҫул ытла ачасемпе ӗҫленӗ. Вӗренекенсен темиҫе ӑрӑвне спорта юратма, сывлӑхлӑ пурнӑҫ йӗркине хӑнӑхтарнӑ. Вӗсем паянхи кунччен хӑйсен наставникне тав тӑваҫҫӗ.

«Ӑҫта ҫуралнӑ – ҫавӑнтах кирлӗ пулнӑ», – теҫҫӗ хӑйсен пурнӑҫне пӗчӗк Тӑван ҫӗршывне тата унӑн ҫыннисене халалланӑ ҫынсем пирки. Сергей Рудольфович – шӑпах ҫакӑн йышши ҫынсенчен пӗри. Вӑл биатлонпа тата йӗлтӗрпе чупса СССР спорт мастерӗ ятне илнӗ. Шупашкар хулинчи Чӑваш патшалӑх институтӗнчи физкультура факультетӗнче пӗлӳ илнӗ, ҫар тивӗҫне кирлӗ чухлӗ пурнӑҫланӑ хыҫҫӑн тӑван района таврӑннӑ. Мӗн тивӗҫлӗ канӑва кайиччен Москакасси ачисем валли тренер пулса йӗлтӗр секцине ертсе пынӑ тата физкультура урокӗсем ирттернӗ.

Сергей Рудольфович тӳрӗ кӑмӑлпа, пысӑк интереспа тата кӑтартусем тӑвассишӗн ӗҫленӗ. Спорт азарчӗ «ерекен» пулӑм пулнине вара пурте пӗлеҫҫӗ. Тен ҫавӑнпа Сергей Рудольфович тӑрӑшнӑ ҫулсенче Москакасси спортсменӗсене тӗрлӗ ӑмӑртӑвӑн хисеп пъедесталӗсенче курма пулнӑ. Уйрӑмах йӗлтӗрҫӗсем савӑнтарнӑ. Спортӑн ҫак тӗсне мӗн ачаран кӑмӑллакан Сергей Рудольфович шкулта чылай вӗренекене йӗлтӗрпе чупма явӑҫтарнӑ. Вӑл ачасемпе урокра кӑна мар, ытти чухне те ӗҫленӗ. Шкулта ӑс пухакансем ялтан 1,5 ҫухрӑмра вырнаҫнӑ Лантӑш вӑрманӗнче иртекен занятисене хаваспах ҫӳренӗ.

Акӑ мӗнле аса илет Сергей Рудольфович йӗркеленӗ уроксене А. Алексеева: «Вӑл пире ялан ҫапла калатчӗ: «Йӗлтӗрпе ахаль ан ҫӳрӗр, ҫут ҫанталӑкпа киленӗр». Пӗррехинче вӑрманта заняти вӑхӑтӗнче эпир пӑши куртӑмӑр. Хӑрушӑ пулса кайрӗ, анчах Сергей Рудольфович пире лӑплантарчӗ. Вӑл физкультура урокӗсем патне интерес ҫуратнисӗр пуҫне пирӗн кӑмӑла ҫирӗплетнине те халӗ ӑнланатӑп. Ҫаксем пурте пурнӑҫра кирлӗ пулчӗҫ».

Шкултан вӗренсе тухнисем Сергей Рудольфовича тата вӑл ирттернӗ уроксене ырӑпа ҫеҫ аса илеҫҫӗ. Вӗсенчен кашни ӑна тав тума хатӗр. Паянхи кун Раҫҫейӗн тӗрлӗ кӗтесӗнчен социаллӑ сетьсем урлӑ чылайӑшӗ вӗрентекене унӑн ӗҫӗшӗн пысӑк тав сӑмахӗ калать.

«Вӑл пирӗншӗн чӑн-чӑн тренер тата ахаль лайӑх ҫын шутланать, унӑн канашӗсемпе усӑ курса эпир пурнӑҫ ҫулӗпе пуҫа ҫӗклесе утма вӗреннӗ», – тесе ҫырать Ирина Архипова.

«Сирӗн урокӑрсем пире спорта юратма, хамӑра тонусра тытма хӑнӑхтарнӑ, занятисене ялан пӗр сиктермесӗр ҫӳренӗ. Эсир пире хамӑра кӑтартма майсем туса параттӑрччӗ, ҫӗнтерӳ патне ӑнтӑлма тата лайӑх ҫитӗнӳсем тума хавхалантаратӑрччӗ. Физкульт-тав пирӗн физкультура учительне!» – тав тӑваҫҫӗ ӗнерхи вӗренекенсем.

Москакасси шкулӗнче сӑн ӳкерчӗксенчен, Хисеп хучӗсенчен тата район шайӗнче ҫӗнтернӗ чемпион кубокӗсенчен йӗркеленӗ кӗтессем пур. Мӗнре-ши вӗсен ҫитӗнӗвӗ? Пӗр енчен, унӑн никӗсӗнче – Сергей Кириллов физкультура учителӗ ҫамрӑк спортсменсене воспитани памалли тарӑн шухӑшласа хатӗрленӗ система, унӑн йӗркелӳҫӗ пултарулӑхӗ. Чи пӗлтерӗшли вара – хӑйӗн вӗренекенӗсене чунтан юратни. Мӗншӗн тесен вӑл кашнине чун-чӗре ӑшшине панӑ. Тепӗр енчен, учитель нихӑҫан та пӗр вырӑнта тӑмасть. Вӑл яланах хӑйне аталантарассипе ӗҫлет.

Ҫак вӑхӑт хушшинче Сергей Рудольфович чылай лайӑх спортсмен ҫитӗнтернӗ. Чи кирли – кашнине ӗҫчен, ырӑ та тӳрӗ кӑмӑллӑ ҫын пулса ӳсме воспитани пани. Ҫакна унӑн ӗнерхи вӗренекенӗсен шӑписем ҫирӗплетсе пама пултараҫҫӗ.

Ялта вара Кирилловсен ҫемйи пирки сӑмах хускатсан, кирек кам та вӗсем ҫинчен нумай ыррине ҫеҫ калать. Вӗсем мӑшӑрӗпе икӗ ача – Снежана тата Николай – ҫитӗнтернӗ. Снежана ашшӗ-амӑшӗ тӗслӗхне ӑша хывса педагогика пӗлӗвӗ илнӗ. Халӗ Мускаврӑ ӗҫлет. Сергей Санкт-Петербургра артиллери офицерне вӗренсе тухрӗ. Сири ҫӗршывӗнче игилпа ҫапӑҫрӗ, халӗ Украинӑра нацистсемпе ҫапӑҫать.

Асламӑшӗпе кукамӑшӗ, аслашшӗ-кукашшӗ ҫумӗнче – вӗсене юратакан мӑнукӗсем.

Сергей Рудольфович нумай ҫул тӑрӑшса ӗҫленӗшӗн ӗҫтешӗсен, вӗренекенсен тата вӗсен ашшӗ-амӑшӗн, пӗр ял ҫыннисен пысӑк хисепне тивӗҫнӗ. Унӑн ӗҫне тӗрлӗ шайри чылай Хисеп хучӗпе палӑртнӑ. Ҫав шутра – СССР Спорт министерствин Хисеп хучӗпе те.



2023 ҫул – Педагогпа наставник ҫулталӑкӗ. Сергей Рудольфович, Москакасси шкулӗнче вӗреннӗ темиҫе ӑрӑвӑн наставникӗ, ҫак ҫула хӑйӗн тесе шутлать.

**«Педагогсемпе наставниксем – Муркаш ҫӗрӗн мухтавӗ» проект Чӑваш Республикин Цифра аталанӑвӗн, информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерстви пулӑшнипе пурнӑҫланать.**

Физкультурник кунӗ ячӗпе

# Ӗҫ ҫыннисен спартакиади иртрӗ



**Учительсен пӗрлештернӗ командинчи Сергей Васильев турник ҫинче 33 хут туртӑнса 1-мӗш вырӑна тивӗҫрӗ.**

Сывӑ пурнӑҫ йӗркине тытса пырас ӗҫре юлашки ҫулсенче пӗтӗм Раҫҫейри физкультурӑпа спорт комплексӗн ГТО нормативӗсене пурнӑҫласси малти вырӑна тухрӗ. Унта хутшӑнакансен йышӗ те ҫулсерен ӳссе пырать. Иртнӗ эрнекун, ҫурла уйӑхӗн 11-мӗшӗнче, физкультурӑпа спорта парӑннисем Физкультурник кунне (ҫурла уйӑхӗн 12-мӗшӗ) уявлама «Сывлӑх» спорт шкулӗ умне пухӑнчӗҫ. Нумай территори пайӗ ҫак уява куҫ хупса ирттерчӗ пулсан та, асӑннӑ куна халалланӑ ӑмӑртусене 5 команда тулли йышпа тухрӗ. Вӗсен шутӗнче Муркашри тӗп больница, Орининпа Хорнуй, Ҫатракасси территори пайӗсен тата муниципалитет округӗн учительсен пӗрлештернӗ командисем. Кашнинчех – 3 арҫынпа 3 хӗрарӑм тата организаци ертӳҫи.

Спартакиадӑна уҫнӑ май муниципалитет округӗн пуҫлӑхӗ Алексей Матросов Муркаш тӑрӑхӗнче физкультурӑпа тата спортпа туслисен йышӗ малашне те ӳссе пырасса шаннине палӑртрӗ.

– 2000 ытла ҫын ГТО нормативӗсене пурнӑҫлани пирӗн округра пурӑнакансем сывӑ пурнӑҫ йӗркине тӗп вырӑнта тытнине ҫирӗплетет. Кунпа пӗрлех физкультурӑпа туслисем спортӑн ҫӗнӗ ӳсӗмӗсене ҫӗнессипирки те пирӗн иккӗленӳ ҫук. Ҫапла вара пирӗн хушӑра чемпионсен хисепӗ те ӳссе ҫеҫ пырӗ, – терӗ спартакиадӑна хутшӑнакансене Физкультурник кунӗпе саламласа Алексей Николаевич.

Ӗҫ ҫыннисен спартакиадине хутшӑнакансем те, вӗсен тӑрӑшулӑхне курма пынисем те йышлӑччӗ ҫав кун. Депутатсен Муркаш муниципалитет округ Пухӑвӗн председателӗ Александр Иванов вӗсем пӗр ҫемье пулнине палӑртрӗ:

– Спорт вӑл – илем тата сывлӑх, вӑрӑм пурнӑҫ никӗсӗ. Ҫакна физкультурӑпа, спортпа туслашнисем алӑ тупанӗ ҫинчи пек курса тӑраҫҫӗ. Эсир ҫакна ӑнланса илнине кура хӑвӑр тӗслӗхпе ыттисене те ҫул уҫса парасса ӗненетӗп. Ҫын физкультурӑна юратма пуҫланине пысӑк ҫитӗнӳпе танлаштарма пулать, – терӗ Физкультурник кунӗпе саламласа.

Кун хыҫҫӑн спартакиадӑна хутшӑнакансем старта тухрӗҫ. Вӗсем ҫак кун 100 метр, 2 километр (хӗрарӑмсем) тата 3 километр (арҫынсем) дистанцисенче, турник ҫинче туртӑнса, ҫӗртен тӗртӗнсе (хӗрарӑмсем), дартс персе, выртнӑ ҫӗртен кӗлеткене ҫӗклесе (1 минутра), гимнастика сакки ҫине тӑрса урасене тӳрӗ тытнипе малалла тайӑлса, пневматика винтовкинчен 10 метрти мишене тӗл персе, бассейнра эстафета ишсе, вӗрен туртса ӑмӑртрӗҫ.

Пур ӑмӑрту та ҫивӗч кӗрешӳре иртрӗ. Командӑсем те, уйрӑм спортсменсем те ҫичӗ хут тар кӑларсах ҫӗнтерӳшӗн тӑрӑшрӗҫ. Кунта уйрӑм спортсменсене ырӑ енчен палӑртса хӑварни вырӑнлӑ. Тӗслӗхрен, Оринино территори пайӗнчен килнӗ Анастасия Попугаева 5 хутчен пӗрремӗш вырӑна, тепринче 2-мӗш вырӑна тухса командӑна пысӑк тӗкӗ пачӗ. Ҫак командӑри Роман Емельяновпа Никита Павлова та ӑмӑртусен нумай тӗсӗнче ҫитекенни пулмарӗ. Лайӑх ӑмӑртакансем хушшинче ҫавӑн пекех Ҫатракасси территори пайӗшӗн старта тухнӑ Дарья Пушкинӑпа Александр Лукина, Хорнуй территори пайӗнчи Светлана Ивановӑна, учительсен пӗрлештернӗ командинчи Кириена Ивановӑпа Николай Щукина ырӑ енчен палӑртмалла.

Спартакиадӑна хутшӑнакансене курма пынисен хӑйсен хаклавӗ пулчӗ. «Командӑсен йышӗ ытларах пулсан кунашкал спартакиадӑн илемӗ те пысӑкланӗччӗ», – терӗҫ хӑйсен сӑмахӗнче Шурчари тӗп шкулта 33 ҫул физкультура вӗрентекен Олимпиада Бардасовӑпа волейболла выляссипе 12 хутчен район чемпионӗ пулнӑ, асӑннӑ спорт тӗсӗпе 1 категори судйи Георгий Лукин (Уйкас Янасал территори пайӗ).

Сӑмахӑма вӗҫлесе ҫакна каласа хӑварам. Ӗҫ ҫыннисен кӑҫалхи спартакиади Физкультурник кунӗ ячӗпе ҫеҫ пулмарӗ. Старта тухнисем хӑйсен кӑтартӑвӗсене Чӑваш Республикинче физкультурӑпа спортӑн ертсе пырас органне туса хунӑранпа 100 ҫул ҫитнине халалларӗҫ.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сӑн ӳкерчӗкӗсем.**





**Умра ҫӑмӑл мар дистанци. Ҫуран чупакансем ҫак кун 100 метр, 2000 метр (хӗрарӑмсем), 3000 метр (арҫынсем) дистанцисенче ӑмӑртрӗҫ. Кашни дистанцирех хӗрарӑмсемпе арҫынсем хушшинче те хӑйсен ҫӗнтерӳҫисем пулчӗҫ. Вӗсем пурте Хисеп грамотине тивӗҫрӗҫ.**





**Округ администрацийӗн вӗренӳ, ҫамрӑксен политикин, физкультурӑпа спорт пайӗн пуҫлӑхӗпе Зоя Дипломатовӑпа спортпа физкультура секторӗн пуҫлӑхӗ Евгений Петров Константин Никифоров, Александр Ермолаев, Матвей Цветков волейболистсене волейболла выляссипе пӗрремӗш спорт разрячӗ панӑ самант.**